# Класс сехечĕ «Салам, çĕр ĕçченĕ»

Чăваш халăхĕн пин-пин çула тăсăлакан пурнăçĕ мухтава тивĕçлĕ. Çак халăх ĕмĕр-ĕмĕр выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, тыр-пул акса, çурт-йĕр лартса, улма-çырла, пахча-çимĕс ӳстерсе пурăннă. Чăваш ĕмĕрĕпех хăй çăкăрне çинĕ, кӳршĕлле халăхсене пулăшнă.

Паян эпир çĕр ĕçченĕ, унан ĕçĕ çинчен калаçăпăр, çăкăр пирĕн сĕтел çине мĕнле çитнине аса илĕпĕр.

Чи малтанах эпир чăваш çĕрĕ çинчен видеофильм пăхăпăр (видеофильм «На земле чувашской»).

-Чăваш çĕрĕ çинчен мĕн пĕлтĕр-ха эсир, ачасем?

-Чăваш çыннисем мĕн ĕçлесе пурăнаççĕ?

-Ĕлĕкхи вăхăтра чăвашсем çĕр турринчен мĕн ыйтнă? Мĕн астуса юлтăр-ха эсир?

Ĕлĕкех чăвашсем çĕре аннепе танлаштарнă. Çур аки пуçличчен çĕр турринчен каçару ыйтнă. Тăрăшса ĕçлеме, тухăçлă тыр-пул ӳстерме ирĕк ыйтса илнĕ.

Чăваш çыннин пурнăçĕ нихăçан та çăмăл пулман: мĕн ĕлĕкрен вăл çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Çĕр ĕçне ĕçлеме хальхи пек ял хуçалăх машинисем пулман. Ĕлĕк çĕр ĕçченĕ уй- хирти ĕçсене алпа е лаша пулăшнипе тунă. Тыр-пул акас умĕн çĕрне лашапа сухаланă, сӳреленĕ. Тыррине алпа акнă. Пиçсе çитнĕ тырра çурлапа вырнă. Тырра тирпейлĕ тата хăвăрт пуçтарса кĕртме турăран вай-хал ыйтнă.Пилĕк ан ыраттăр тесе вырса илнĕ пĕрремĕш пучахсене пиçихxи çумне чикнĕ. Хĕвел анса ларичченех уйра ĕçленĕ. 8-9 çула çитнĕ ачасем те тырă вырма тухнă.

Тырă пучаххисенчен кĕлтесем туса пынă. Кайран кĕлтесене сарса хунă та тăпачпа çапнă, лашапа аштарнă. Çапла майпа тырă пĕрчисем тĕшĕленнĕ. Эпир сирĕнпе музейра çурла, тăпач, ĕлĕкхи суха пуç курнă. Вĕсене эсир пĕлетĕр.

Хальхи вăхăтра çак ĕçсене ял хуçалăх машинисем тăваççĕ. Апла пулин те çĕр ĕçĕ вăл питĕ йывăр.Çак ĕçре йывăрлăхран хăраман, маттур, ĕçчен çынсем ĕçлеççĕ. Çĕр ĕçченĕсем çĕр çинче мĕнле тыр-пулсем туса илеççĕ?(ӳкерчексем кăтартатăп).

***1-мĕш ĕç. Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупмалла.***

(Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Хут листи çинче тупмалли юмахсем тата тупсăмĕсем-ӳкерчĕксем.Ачасен вĕсене стрелкăпа пĕрлештермелле.)

-Тепĕр тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлĕр. Пĕр йывăç çинче çĕр çирĕм çăмарта. Мĕн вăл? (Ачасен хуравĕ: «Вир».)

Чăвашсем пĕтĕм уйсен çуррине ыраш акса ӳстернĕ, вир кĕрпи вара пĕчĕкрех лаптăк йышăннă. Лайăх çитĕнтĕр тесе ăна темиçе хутчен çумланă. Атьăр-ха, ачасем, эпир те çерем ватса вир акăр.(Ачасем **«Çерем ватса вир акрăм»** вăйă выляççĕ.)

- Çăкăр мĕнле майпа пирĕн сĕтел çине килсе выртать-ши?(Ачасем хуравлаççĕ.)

Çăкăр пирен сĕтел çине лекиччен тĕрлĕ профессиллĕ çынсем патĕнче пулать.Вĕсем мĕн ĕçлесе пурăнаççĕ?(Ачасем калаççĕ, профессисене сăнлакан ÿкерчĕксем кăтартатăп)

Тракторист - суха тăвать, акать.

Комбайнĕр – тырра вырать, çапать, сăвăрать.

Шофер – тырра армана леçет.

Арманçă – тырра авăртать.

Çăкăр пĕçерекен – чуста çăрса çăкăр пĕçерет.

Сутуçă – çăкăра пире сутать.

***2-мĕш ĕç. Йăван ĕçне пурнăçламалла.***

(Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Хут листи çинче йăва ÿкерчĕкĕ, ваттисен сăмахĕсем. Вĕсен вĕçне тупмалла.)

| | |
|---|---|
| Çăкăр тутине- | çÿремест. |
| Çăкăр хырăм хыççăн | кулачă пекех. |
| Ĕçчен çыншăн çăкăр | ĕçлекен пĕлет. |

Çăкăр çинчен калакан ваттисен сăмахĕсем питĕ нумай. Эсир ачасем тата мĕнлисене пĕлетĕр?(Çăкăр çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене аса илетпĕр.)

***3-мĕш ĕç. Вăйă «Мĕн ытлашши?»***

(Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Хут листи çинче тыр-пул ячĕсем.Пĕр сăмахĕ ытлашши.)

ыраш
тулă
пăрçа
урпа
кукăль
сĕлĕ
вир

«Çăкăртан асли çук» - тенине мĕнле ăнланатăр?

«Çăкăртан асли çук», - тесе ахальтен каламан ваттисем. Сĕтел çине те ытти апат-çимĕçе лартиччен чи малтан çăкăрпа тăвар лартаççĕ. Пепке çут тĕнчене килсен ун ячĕпе çăкăр пуçласа ас тивеççĕ. Ачана çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телейпе пархатар сунаççĕ. Инçе çула тухать-и, салтака каять-и, çемье çавăрать-и – пур чухне те амăшĕ хăйĕн тĕпренчĕкне пуçламан çăкăрпа пиллет, ыррине сунать.

Çăкăр вăл – пирĕн пурнăç, халăх пуянлăхĕ. Çăкăр авалтанах халăхра пысăк хисепре пулнă. «Умăнтан çăкăр ан татăлтăр», - тенĕ çынсем пĕр-пĕрне ырă сунса. Паян кун та эпир пысăк хăнасене çăкăр-тăварпа кĕтсе илетпĕр.

Ĕлĕкхи вăхăтра çăкăршăн хресчен тем чул асап тÿснĕ. Чăвашсен çĕрĕ хĕсĕк пулнă. Тыр-пул тухăçĕ пысăк пулман. Хĕрарăмсене çĕр паман. Чухăнсен ани-çаранне пуянсем турта-турта илнĕ. Тăварлă куççульпе, вĕри тарпа йĕпеннĕ ун чухне çăкăр татăкĕ.

Халĕ пирĕн çĕр шывра çăкăр çителĕклĕ. Ку вăл пирĕншĕн чăннипех те пысăк телей. Анчах тепĕр чухне çăкăра хисеплеменнине те курма пулать. Ку

вара чун-чĕрене питех те ыраттарать. «Çăкăра хисеплемен çынран ыррине ан кĕт», тенĕ халăхра авалах.

Çăкăр вăл - çĕр тĕрекĕ. Çакна, хаклă ачасем, нихăçан та ан манăр. Кашни çăкăр чĕллиех- хĕвел шевли, ăшă çумăрăн кĕмĕл тумламĕсем, çуллахи тӳлек çил кĕвви. Кашни çăкăр чĕллинчех ял ĕçченĕсен канăçсăр ĕçĕ-хĕлĕ, вай-халĕ. Тыр-пул çитĕнтерсе мĕн пур халăха тăрантаракан çын вăл – чăннипех Улăп паттăр, тĕнчери чи хисеплĕ çын.

**Са́ва́сем:**

1-мĕш ача. Çăкăртан асли те çук,
Çăкăртан хакли те çук.
Çăкăр вăл – çынсен кун çулĕ,
Вăл пулсассăн пурнăç пулĕ.

2-мĕш ача. Çăкăрта ĕçченĕн тарĕ,
Вăйĕ, шанчăкĕ, хастарĕ,
Канăçсăр ĕç-хĕл уявĕ,
Çĕрĕм-шывăмăн мухтавĕ.

3-мĕш ача. Çăкăр вăл сĕтел илемĕ,
Çăкăр пурнăç тăсакан.
Вăл пулас кунсен хĕлхемĕ.
Тĕнче ырă – вăл пулсан.

4-мĕш ача. Çăкăр кирлĕ ирхине,
Çăкăр кирлĕ каçхине,
Çăкăр кирлĕ кашни кун –
Çавăнта хăвачĕ ун.

5-мĕш ача. Çăкăр пултăр кăпăшрах,
Çăкăр пултăр пахарах,
Çăкăр пултăр тутлăрах,
Çăкăр пултăр яланах.

**Автор: Ильина О.В.**
14.10.2024